Спорт

# Старта – В. Егорова парнисемшĕн

Иртнĕ шăмат кун Муркашри стадионта тӳрех икĕ ăмăрту пулса иртрĕ: Олимп чемпионкин В. Егорован парнисене çĕнсе илессишĕн республикăри çăмăл атлетика кросĕ тата Муркаш районĕн хуçалăхсемпе организацисен, учрежденисемпе ял тăрăхĕсен хушшинчи уçă ăмăртăвĕ.

1992 çулхи Олимпиадăри çĕнтерӳ хыççăн иртме пуçланă та ĕнтĕ районта В. Егорова парнисемшĕн иртекен ăмăртусем. Малтанах вĕсем район шайĕнче кăна иртнĕ тата унта шкул ачисем кăна хутшăннă пулсан, халĕ вара – республикăри чи массăллă ăмăртусенчен пĕри вăл. Акă кăçал та асăннă ăмăртăва пурĕ 850 ытла çын хутшăнчĕ.

Нумай çамрăк спортсмена килĕшекен ăмăртăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. Вăл пысăк спорта тухасси шăпах çакăн евĕрлĕ ăмăртусенчен пуçланни пирки каларĕ. Çак сăмахсем тĕрĕс пулнине ăмăртăва килсе çитнĕ тĕнчипе паллă В. Соколова тата Раççейре хăй çинчен кĕске хушăра пĕлтерме пултарнă спортсменка Н. Охотникова та çирĕплетсе пачĕç. Вĕсем те темиçĕ çул каялла спорт çулне çак ăмăртуранах пуçланă. Халĕ вара – çамрăксемшĕн тĕслĕх вырăнĕнчех.









Стадионта пуçтарăннисене ЧР спорт, физкультура тата туризм министрĕн çумĕ С.В. Мельников саламларĕ. Сергей Владимирович Муркаш тăрăхĕ паллă спортсменсемпе пуян пулнине тата кунти çынсем спорта килĕштернине палăртрĕ. Çак ăмăртăвăн çĕнтерӳçи А. Николаев министр хатĕрленĕ ятарлă парнен – цифрăллă фотоаппаратăн хуçи пулассине пĕлтерни вара çамрăк спортсменсене уйрăмах хавхалантарчĕ.

Ăнăçлă старт сунакансем хушшинче Валентина Егорован мăшăрĕ Ю.М. Егоров та, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, Муркаш районĕнчи «Единая Россия» партин политканашĕн секретарĕ А.Н. Иванов, ЧР Йĕлтĕрпе чупакансен федерацийĕн ертӳçи А.П. Давыдов та пулчĕç. СССР тава тивĕçлĕ тренерĕ Г. Семенов кунта пултаруллă спортсменсене тупса палăртас тĕллевпе килнĕ иккен.

Кăмăла хăпартакан, вăй паракан сăмахсем хыççăн старта чи кĕçĕннисем – 1996 çулта çуралнă тата кĕçĕнрех хĕр ачасем тухрĕç. Турех каламалла, вĕсем питĕ нумай пулнă пирки ку ӳсĕмрисем хушшинче пĕр чупу кăна пулмарĕ. Кĕрешӳ хĕрӳ пуласси те вĕсен пичĕсем çинчех паллăччĕ. Пĕрремĕш старта Ю.М. Егоров пачĕ. Пĕрле тапранса кайнă хĕр ачасем тăвалла чупса хăпарнă çемĕн пĕр-пĕринчен уйрăларах пычĕç. (Кунашкал ӳкерчĕк ыттисем чупнă чухне те палăрчĕ.) Вĕсем хыççăн çак ӳсĕмри арçын ачасем, кайран 1994-1995 çулсенче çуралнисем, унтан вара 1992-1993 çулсенчи яшсемпе хĕрсем ăмăртрĕç. Ӳсĕм пысăкланнă майĕпе ăмăртăва хутшăнакансен речĕсем сайралансах пычĕç. Анчах пурин те çĕнтерес кăмăлĕ вăйлă пулни сисĕнсех тăчĕ.

Юрать, çанталăкĕ ытла сивĕ мар тата çумăрсăр пулчĕ. Çавна пулах ытти районсенчен те ăмăртăва нумаййăн килнĕ. Çăмăл атлетикăра республика шайĕнче мала тухассишĕн 38 шкул команди вăй виçрĕ. Муркаш районĕнчи вĕренекенсемпе пĕрле старта Красноармейски, Элĕк, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Горномарийски районĕсенчен тата Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенчен килнĕ спортсменсем тухрĕç.

Тулли мар вăтам шкулсем хушшинче Атапайсене çитекенни пулмарĕ. Шатракассипе (2-мĕш вырăн) Сосновкăри (3-мĕш вырăн) шкулсем те хастар пулнине кăтартса пачĕç. Вăтам шкулсен кăтартăвĕсемпе тунă пĕтĕмлетӳ вара çапларах пулчĕ. Пĕлтĕрхи пекех 1-мĕш вырăна Тойкилтĕсем çĕнсе илчĕç. Кубок та, министр парни те вĕсен аллинче пулчĕ. В.Г. Данилов депутат çĕнтерӳçĕсене саламларĕ, укçан парне парса та чысларĕ. Калайкасси шкулĕ тивĕçлипех 2-мĕш вырăна тухрĕ. Чуманкассисем 3-мĕш пулчĕç.

1996 çулта çуралнă тата кĕçĕнрех хĕр ачасем хушшинче Д. Краснова (Красноармейски районĕ) – 1-мĕш, А. Кузнецова (Муркашри вăтам шкул) – 2-мĕш, К. Афанасьева (Етĕрне районĕ) – 3-мĕш пулчĕç. Çак ӳсĕмри арçын ачасенчен чи маттуррисем К. Поствайкин (Горномарийски районĕ), А. Баранов (Калайкасси шкулĕ) тата С. Эркциков (Горномарийски районĕ) пулчĕç. Малти вырăнсене тухас тесе вăйсене пĕртте шеллемерĕç.

1994-1995 çулсенче çуралнисем хушшинче малти вырăнсене хĕр ачасем хушшинче А. Иванова (Элĕк), И. Мадеева (Олимп резервĕсен училищи) тата Т. Комиссарова (Олимп резервĕсен училищи) пайларĕç. Арçын ачасем хушшинче пирĕн районти С. Васильев (Калайкасси шкулĕ) мала тухрĕ. Хыççăнхи вырăнсене Э. Краснов (Красноармейски) тата В. Ишмейкин (Хĕрлĕ Чутай) тухрĕç.

Аслă ушкăнтисен те хăйсен çĕнтерӳçисем: каччăсенчен Д. Данилов (Красноармейски), Н. Давыдов(Элĕк), А.Андреев (Элĕк) малти вырăнсене тивĕçрĕç; К. Иванова (Калайкасси), Д. Алексеева (Йӳçкасси) тата М. Петрова (Олимп резервĕсен училищи) хĕрсем хушшинче палăрчĕç.

Çăмăл атлетика кросĕ хыççăн Муркаш районĕн уçă ăмăртăвĕ пуçланчĕ. Пурĕ 11 команда старта тухма кăмăл тунă. Вĕсенчен 9-шĕ – ял тăрăхĕсенчен пулчĕç. Старта тухакан хĕрарăмсем хушшинче Чуманкасси ял тăрăхĕшĕн чупакан Вера Соколова пурри пăлхану та çуратрĕ. Паллă спортсменкăпа старта тухни хăйне май çитĕнӳ пекех пулчĕ ĕнтĕ. Паллах финиша Вера пĕрремĕш çитрĕ. Арçынсем хушшинче Катькас ял тăрăхĕнчи А. Смирнов мала тухрĕ. Çак ăмăртусене кашни çулах хутшăнакан Оринин шкулĕнчи физкультура учителĕ С.И. Алексеев кăçал та хăйне спортри çӳллĕ шайрах тытнине тепĕр хут кăтартрĕ. Çамрăксен ретĕнчен тухнă пулин те дистанцие вĕсем пекех çăмăллăн чупса тухрĕ.

Ăмăртăвăн тĕп судйи А.Н. Петров тата тĕп секретарĕ В.В. Петров часах çĕнтерӳçĕ-командăсем çаксем пулнине каларĕç: 1-мĕш вырăн – Катькас ял тăрăхĕн команди, 2-мĕш вырăн – районти шалти ĕçсен пайĕн команди, 3-мĕш вырăн – «Моргаушская» строительство организацийĕн команди.

Ăмăрту вĕçленчĕ. Çĕнтерӳçĕсем пурте грамотăсемпе парнесене тивĕçрĕç. Мала тухайманнисем вара пĕр-пĕринпе ума пысăкрах тĕллевсем лартмалли пирки калаçса килсене çул тытрĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: çĕнтерӳçĕсемпе пĕрле; чупура - 1992-93 çулсенче çуралнă каччăсем; Атапай шкулĕ – çĕнтерӳçĕсен ретĕнче.**

**Администрация Моргаушского района информирует о предстоящем предоставлении земельного участка ЧП Быкову А.В. на правах аренды площадью 40 кв. м. для размещения временного торгового павильона по продаже товаров бытовой химии. Адрес предполагаемого местоположения, ориентир: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 44.**

**Продается трехкомнатная квартира в с. Моргауши. Индивидуальное отопление. Кирпичный дом.**
**Тел.: 8-927-667-24-31, 8(83541)37-24-31. 1-2.**

**ЗООПАРК «ЯГУАР» с 23 по 29 сентября**
**зоопарк расположен напротив Моргаушского РДК, время работы с 10-00 до 21-00 ч. Цены билетов: взрослый - 80 руб., детский - 60 руб., дети до 3-х лет - бесплатно, аттракционы - 40 руб. 2-2.**

**ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 1-3.**

## Тав тăватпăр

Çурлатри ялĕнче пурăннă Алексей Иванович Аксендарова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата пирĕн хуйха пĕрле пайланăшăн тăвансене, кӳршĕсене, ял-йыша, пĕрле ĕçленĕ, шкулта тата çарта пĕрле пулнă юлташĕсене, Муркаш район администрацине, Муркаш ял тăрăхне, Е. Андреев яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăха, районти тĕп больницăн, Муркаш почтампчĕн, «Шуракăш» ача сачĕн ĕçченĕсене, «Муркаш» фольклор ушкăнне чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Аксендаровсен çемйи.**

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çĕньял-Хуракасси ялĕнче пурăннă Сергей Юрьевич Якимова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн «Свобода» хуçалăхăн правлени ĕçченĕсене, ĕне ферминче ĕçлекенсене, Çатракасси шкулĕнчи учительсене, пĕрле вĕреннисене, юлташĕсене тата тăван-пĕлĕшсене чĕререн тав тăватпăр.

**Якимовсен çемйи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070505:121, местоположение: участок находится примерно в 593 м по направлению на восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, д.44, площадью 5565 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070504:68, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части квартала 21:17:070504, площадью 6000 кв.м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения прудового хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:072501:1218, местоположение: установлено относительно ориентира, расположенного в границах участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, территория землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в восточной части квартала 21:17:072501, площадью 99741 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Требуются автослесарь, автоэлектрик для работы в автосервисе с. Моргауши. Зарплата высокая. Также требуется парикмахер. Тел.: 8-927-847-85-59.**

**«Меркурий-центр» приглашает за покупками. Всегда в ассортименте: офисная бумага, тетради, канцтовары, книги, игрушки и мн. др. Заказ по каталогу. Выгодные цены. Работаем по безналичному расчету.**
**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, 5.**
**Тел.: 8-927-993-58-33. 3-3.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР**
**с установкой, регистрацией и обслуживанием.**
**Тел.: 8-905-345-77-19. 4-4.**



**УВАЖАЕМЫЕ ПАССАЖИРЫ!**
В билетной кассе «Никита» вы можете приобрести билеты на ежедневные рейсы «Чебоксары–Москва». Время отправления из с. Моргауши в 20-00 ч.
Комфортабельные автобусы АН 303, АН 577, АН 006, АН 255, АН 066 следуют до ст. метро Черкизово, ст. метро Измайловская. 11-я поездка – бесплатная!

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.**
**Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 16-20.**

**Требуются рабочие на строительство коттеджа. Профессия: монолитчики – оплата сдельная; разнорабочие - оклад 25000 руб. Тел.: 8-906-304-97-43, 8-960-032-94-24. 2-3.**

Мир окон и дверей
☎29-80-60
**ОКНА пластиковые**
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя Чувашии теперь... в **МОРГАУШАХ**
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
**8-927-669-80-60**
*Набор по уходу за окнами – в подарок! Скидка 20-25 %.*

СХПК ПЗ им. Е. Андреева выражает искреннее соболезнование Аксендаровой Раисе Павловне, проработавшей долгие годы заведующей фермой и техником-осеменатором в данном хозяйстве, в связи со скоропостижной смертью ее сына

**АЛЕКСЕЯ.**

Москакасси шкулĕн коллективĕ кунта ĕçленĕ
**Наталия Николаевна**
**ЯНДИМИРОВА**
чылай çул хушши йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Зам. гл. редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Белов А.П.**
**Номер подписан 23.09.2008 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3594.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.